Шупашкар район хаçачĕ ✵ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

16 (9309) № ✵ 2007 çулхи февралĕн (нарăс уйăхĕн) 14-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

✵ ФОК

## ЯЧĔ МĔНЛЕ ПУЛĔ?

***Пирĕн район паян тата тепĕр пысăк объекта, физкультурăпа сывлăх комплексне, хута ярассипе тимлет. Яваплăхĕ питĕ пысăк, çавăнпах район пуçлăхĕ А.Князев хутшăннипе кашни эрнерех кунта ĕçлĕ планерка иртет. Эрне кун та Анатолий Пантелеймонович тата унăн çумĕ – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх, капиталлă строительство управленийĕн ертӳçи В.Сидоров ФОКра пулчĕç.***



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

*«Ăçта мĕнле пӳлĕмсем вырнаçтарассине халех палăртмалла», – терĕç планеркăра.*

Кĕçех кунта ĕçсем пĕтĕмĕшле вĕçленеççĕ. Анатолий Пантелеймонович каланă тăрăх, март вĕçĕнче сывлăх комплексĕ çынсене йышăнма пуçламалла. Апла, унăн ячĕ те кирлĕ. ФОКа кĕнĕ çĕре вырнаçтарĕç ăна. Мĕнле ятпа хăйĕн кун-çулне пуçлĕ-ха вăл? Шутламалăх пур. Хăвăрăн сĕнĕвĕрсене район администрацине шăнкăравласа пĕлтерме пултаратăр. Ара, мĕнле раççĕ халĕ.

Спортзалпа Саранска кайса килсен ыйту уçăмланчĕ. Урайĕнче «Американский клен» паркет пулĕ. Çакăншăнах район хăйĕн бюджетĕнчен тата укçа хушать. Вăл хăйĕн хакне кăларатех. Мĕншĕн тесен ку урай пĕтĕм тĕнчери ăмăртусене те ирттерме май парать. Çитменнине, ытти ФОКри урайсем пек ачасен сывлăхне те пĕтермест. Çакă вара – чи кирли. Паллах, спорт оборудованийĕсемпе инвентарьсем пирки те халех шухăшламалла. Вăл чăтăмлă, çав вăхăтрах меллĕ пултăр.

Иртнинчипе танлаштарсан нумай ĕç туса ирттернĕ. Бассейнра пĕтĕмпе капăрлату пырать. Республикăри ытти ФОКсемпе танлаштарсан, эпир бассейн тĕлĕшпе пуян. Пĕчĕккисем валли «лягушатник» тата çитĕннисем валли уйрăм хăй бассейн. Проект тунă чухне шыва кĕмеллине вăрман енне е çул енне тумалли пирки калаçу пулнă. Халĕ хĕвел тухакан енне бассейнсене палăртни тĕрĕс пулнине тепĕр хут курса ĕненчĕç. Ара, тĕрлĕ тĕслĕ чулсемпе илемлетнĕскер çине пайăркасем ӳксен тата та хитреленет. Çитменнине хĕвел хĕртнипе тата та ăшăнать вăл. Ачасен чăмпăлтатмалли вырăнĕ çитĕннисенчен ăшăрах пуласси паллă – кунта тата урайне ятарласа температурăна хăпартмалли хатĕрсем хурса хăварнă. Душ кĕмеллисемпе саунăсенче те ĕç вĕçленнĕпе пĕрех.

Энергетиксем те ĕлкĕрсех пыраççĕ. Пур çĕре те çутă кĕртнĕ. Светильниксене вырнаçтаресси унран та нумай килет-çке...

А.СУСМЕТ.

✵ Олимпиада

## ЙЫШ ХУШĂНЧĔ

**Технологи** предмечĕпе **республикăри олимпиадăра** арçын ачасенчен Кӳкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулти Артем Орешниковпа Алексей Степанов призлă вырăнсене йышăнни çинчен çырнăччĕ. Çавăн чухнех хĕрачасен хушшинче лицейри **Бэла Иванова** та палăрнă. Унăн – иккĕмĕш вырăн.

**Физкультура** предмечĕ те пире савăнтарчĕ. 10-11-мĕш класри арçын ачасенчен чи пултарулли Чăрăшкасси шкулĕнчи А.Пономарев воспитаннике **Александр Ясмаков** пулнă. Пĕрремĕш вырăна йышăнма теорире те, практикăра та самай тар тăкма лекнĕ ăна. Тренккассинчи Н.Яковлев вĕренекенĕн **Денис Сымовăн** вăй-халĕпе ăс-тăнне 3-мĕш вырăнпа хакланă. Ку та лайăх кăтарту.

**Биологи** предметне кам лайăхрах пĕлет тесе ыйтсан пĕр шухăшламасăр кĕскен: «Лицейçĕсем», – тенĕ пулăттăм. Чăн та, вĕсем миçе çул умлăхыçлă районта малти вырăнсене йышăнса пыраççĕ. Республикăри кăтартусем те савăнтараççĕ. Кăçалхи пекки вара пулманччĕ-ха. Ара, 9-мĕш класри **Екатерина Васильева,** 10-мĕш класри **Бэла Иванова** (сăмах май, кăçал çеç республикăра икĕ иккĕмĕш вырăн), **Сергей Петров** – пурте 2-мĕш вырăн йышăннă. Кунта пĕр самант пур – вĕсене пурне те Р.Абрамова педагог хатĕрленĕ. Юлашки çулсене тишкерсен, Римма Александровна ачисем яланах республикăра призлă вырăнсене йышăнни курăнать. Маттур!

**Тăван чĕлхепе** те малти вырăнсене йышăнакансем пулчĕç. Çĕньял-Покровскинчи Г.Смирнова вĕренекенĕсем, **Анастасия Смирновапа Наталия Токмакова,** чăваш чĕлхипе литература предмечĕн олимпиадинчен 2-мĕш вырăнсемпе таврăнчĕç.

Кăçал 11-мĕш класс пĕтерекенсенчен аслă вĕренӳ заведенийĕнче пĕлӳ ӳстерме пуçлакансем (кунта сăмах **олимпиадăра çĕнтерекенсем** пирки) **«Чувашия» фондăн стипендине** тивĕçĕç.

А.АРДАЛИОНОВА.

✵ Ял пурнăçĕ

## ХАЧĂКРИ ПУХУ

Нумаях пулмасть Хачăк ял çыннисем клуба самаях йышлăн пухăнчĕç. Сăлтавĕ те пулчĕ çав – Хачăксемпе Ишлей ял тăрăхĕн ертӳçи Яков Кушев тĕл пулу ирттерчĕ. Ял тăрăхĕн 2006 çулхи ĕçĕхĕлĕ çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ вăл. Бюджет планне тултарассипе те, унпа усă курассипе те аван ĕçленĕ. Ялсенчи пур хуçалăха та газ кĕртессине вĕçленĕ. Хачăк ялĕнчи фельдшер пунктне тĕпренех юсанă. Юсав ĕçĕсем кăштах клуба та пырса тивнĕ.

Çынсен нушисене тивĕçтерессипе вырăнти влаç органĕ чылай ĕçленĕ пулин те Хачăксем Я.В.Кушев умне чылай ыйту лартрĕç. Акă, яла Шупашкар-Вăрнар çулĕпе хытарса тунă çулпа çыхăнтарни тахçанах. Унта асфальт сарма шантарнăччĕ. Халĕ вара çул пахалăхĕ чакса пырать: çуркунне–кĕркунне уйрăмах инкеклĕ.

Ункă шывĕ урлă бетон кĕпер хывнăранпа 30 çул иртрĕ. Халĕ унăн çивиттийĕ пĕтсех пырать. Кĕпер стройран тухас хăрушлăх куç умĕнчех. Ăна камăн юсамалла? Ял çыннисемшĕн кăна мар, сĕт-çу фермишĕн те ку чи кирлĕ объект. Кĕперпе Чурачăксем те, Янăш-Мамăшсем те усă кураççĕ. Ăна юсамаллах терĕç пухура. Район администрацийĕнчен пулăшу кирлех.

Хачăксене шывпа тивĕçтерес тĕллевпе водопровод хывни кĕçех вунă çул. Анчах ку ырлăхпа ял çыннисем пурте савăнаймарĕç: Набережнăй урама пăрăх паян кун та хывман. Юрать-ха, Петр Кириллович Алексеев хуçалăхĕнче çăл пур: пĕтĕм урамĕ унтан кĕвентепе шыв çĕклет.

Ишлей ял тăрăхĕн пуçлăхне ыйтусем сахал пулмарĕç тĕл пулура. Вăл вĕсене шута илме пулчĕ, май килнĕ таран пурнăçлама шантарчĕ. Яла тирпей-илем кĕртме Хачăксен хăйсен те пуçарулăрах пулма кирлине палăртрĕ.

Тĕл пулура Ишлей ял тăрăхĕнчи ветерансен совечĕн ертӳçи Г.Н.Николаев сăмах илсе ветерансен организацийĕн ĕçĕ-хĕлĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Пуш алăпа çитмен Я.В.Кушевпа Г.Н.Николаев тĕл пулăва: хăйсемпе пĕрле Ишлей культура керменĕ çумĕнчи «Рябинка» хор коллективне илсе килнĕ. Пултаруллă юрă-ташă ăстисен концерчĕ Хачăксене савăнтарчĕ.

А.МИХАЙЛОВ,
Раççей Журналисчĕсен союзĕн членĕ.

✵ Çивĕч ыйту

## КАНАЛИЗАЦИЕ ЮСАМАЛЛА

***Карантай ялĕнчи Молодежнăй урамра канализаци шывĕ юхса выртать тесе шăнкравларĕç çак кунсенче Çырмапуç ял тăрăхĕн территорийĕнчен. Лару-тăрăва йĕркелеменши тесе тунти кун вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе С.А.Ванюшкинпа çыхăнтăмăр. «Халĕ малтанхи пекех вăйлă мар, пĕрех сăрхăнать», – пĕлтерчĕ вăл пире. Канализацишĕн яваплă «Водоканал» предприятии директорне Л.А.Чернова та çак ыйтăвах патăмăр. Акă епле хуравларĕ вăл:***

– Карантай ялĕнче канализаципе ыйту пуррине лайăх пĕлетĕп. Хĕл ăшă тăнă пирки çул япăххине кура унта маларах кĕреймерĕмĕр. Халĕ ятарлă ункăсем илсе килнĕ, вĕсене вырăна кайса вырнаçтарасси çеç юлать.

Хурава В.ЭВЕРККИ шыранă.

## ВЫПУСКНИКСЕН ТĔЛ ПУЛĂВĔ

Иртнĕ шăмат кун Иккассинчи вăтам пĕлӳ паракан шкула тĕрлĕ çулсенчи выпускниксем пуçтарăнчĕç. Вĕсене тĕл пулу касĕ ячĕпе шкул директорĕ А.В.Владимиров, унăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Г.Ф.Захаров, ытти учитель саламларĕç.

Шкулта вĕренсе тухнисем малтан асамлă вăхăта аса илчĕç, кайран ушкăнсене пайланса КВНра тупăшрĕç. Хăйсен пĕлĕвне географи, биологи, литературăпа чĕлхе, метематика, физкультура, рисовани урокĕсенче çирĕплетрĕç. Маларах вĕренсе тухнисем ăстарах пулни курăнчĕ.

Тĕл пулу касĕ хаваслăн вĕçленчĕ.

М.НИКИТИНА, Платка ялĕ.

## «ЯЛ ТĂРĂХĔН КУНĔ» КОНКУРС

Çак конкурс районта пур ял тăрăхĕсенче те иртĕ. Ăна район 80 çул тултарнине халалласа йĕркеленĕ. Кунта ял тăрăхĕсен вырăнти пултарулăх коллективĕсен юрри-ташшисене те шута илĕç.

Конкурса уçаканĕ Апаш ял тăрăхĕ пулнă. Жюри членĕсем унти пултарулăхпа февралĕн 9-мĕшĕнче паллашнă. Март уйăхĕн вĕçĕччен пур çĕре те çитĕç хаклавçăсем.

А.АЛИНИНА.

✵ Республикăра

## ИКĔ ПРЕМИНЕ ТИВĔÇНĔ

Пирĕн культура министрĕ П.С.Краснов журналистикăра паллă çын пулнине чылайăшĕ пĕлет-тĕр. Уйрăмах перестройка тата çамрăк демократи вăхăтĕнче нумай çырнă вăл. Вĕсене тата каярахри публикацисене пухса Петр Степанович пĕлтĕр «Власть слова» ятлă кĕнеке кăларчĕ. Журналистсен пĕрлешĕвĕ кĕнекене университетри çак специальноçа алла илекенсене валли пособи вырăнне хурса хакларĕ. Унран та ытла – 2006 çулхи Элкер премине çак кĕнекешĕн пама йышăну кăларчĕ.

Нумай пулмасть акă Мускавран та хыпар килчĕ: Раççей Журналисчĕсен союзĕ 2006 çулхи премине, «Журналистсем тата журналистика çинчен кĕнекесем» номинацире, пирĕн культура министрне П.С.Краснова пама йышăннă! Хамăрăн министра саламламалли çеç юлать. Эпир те çак министерство хутлăхне кĕнĕ май, тулли кăмăлпах калама пултаратпăр: пире журналистикăна чăннипех ăнланакан çын ертсе пынине халь пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ.

## *ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ!*

***Кам пирĕн хаçата вăхăтра çырăнман, анчах малалла илсе тăрас тет, вăл март уйăхĕнчен илсе тăмалла çырăнма пултарать. Пĕр уйăхлăх хакĕ – 26 тенкĕ те 74 пус.***

***Февральте район хаçачĕсене 2007 çулăн çитес çур çуллăхне çырăнтарма пуçларĕç. Хакĕ малтанхиех: 160 тенкĕ те 44 пус. Срокчен çырăнтарасси март вĕçĕччен пырать.***

Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

***Юн кун, февралĕн 14-мĕшĕ***
юр çăвать,
кăнтăрла −3
çĕрле −3

***Кĕçнерни кун, февралĕн 15-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах юр çăвать,
кăнтăрла −1
çĕрле −15

***Эрне кун, февралĕн 16-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, юр çусах каймасть,
кăнтăрла −14
çĕрле −23

***Шăмат кун, февралĕн 17-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăнтăрла −17
çĕрле −26

# КАФЕ-БАР УÇĂЛЧĔ

Çулталăк вĕçĕнче Кӳкеçри пушар чаçĕнчен инçех мар вырнаçнă «Провиант» суту-илӳ карти уçăлнăранпа çулталăк çитнине паллă турăмăр. 2005 çулта кунта лавкка ĕçлеме пуçларĕ. Çулталăк каяллахипе танлаштарсан, вăй илнĕ вăл: ассортимент пуян, апат-çимĕçпе пĕрлех кил-тĕрĕшре кирлĕ таварсене те сутаççĕ. Тавар туянакансен кăмăлне пĕтĕмĕшле тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Кунта пилĕк продавец вăй хурать. Тĕп бухгалтер каланă тăрăх, тавар çаврăнăшĕ кунне 16 пин тенкĕпе танлашать.

Иртнĕ эрнере каллех кунта халăх пухăнчĕ. Эрне кун суту-илӳ картийĕнче кафе-бар уçăлчĕ. Хĕрлĕ хăйăва район пуçлăхĕ А.Князев тата «Провиант» хуçи Г.Кудрявцев касрĕç. 70-80 вырăнлă кафе паянхи оборудованисемпе пуян. «Тĕрлĕ уяв – туй, юбилей – ирттерес текенсем питĕ нумай. «Сельхозтехника» районĕнчен çеç мар, Шĕнерпуç ял тăрăхĕнчи ялсенчен те чылай килеççĕ пирĕн пата. Çывăх вăхăтра чăн-чăн кил-карти пулĕ»,– теççĕ кунта ĕçлекенсем. Г.Кудрявцев малашне çакăнта парикмахерски, ветеринарипе медицина аптекисем уçма палăртать. Анатолий Пантелеймонович стоматологи кабинетне те уçма сĕнчĕ. Ку сĕнĕве те шута илчĕ хуçа.


Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

Кухньăри çĕнĕ оборудованипе паллашаççĕ.

А.СУСМЕТ.

☼ Хаçатра çырнă хыççăн

***«Тăван Енĕн» иртнĕ номерĕнче «Полигон. Вариантран пĕри – Макаç тăрăхĕ» ятпа информаци пичетленнĕ хыççăн тунти кунах редакцие Тури Макаç ял старости П.Л.Дивликеев килчĕ. Унăн çырăвĕнче – ял халăхĕн пăшăрханăвĕ-сехĕрленĕвĕ. Ку ыйтупа хальлĕхе вĕçне тухман пулин те, çапах вулаканăмăр çырăвне сирсе хăварас темерĕмĕр. Эппин, паллашар-ха унпа.***

## ТУРИ МАКАÇА ХУРА ПĔЛĔТ ХУПЛĔ-ШИ?

Асаплă ял теме те юрать пирĕн Тури Макаç ялне. Юнашар Çĕнĕ Шупашкарти хими комбиначĕ вырнаçнă пирки миçе ял «чĕрине» тапма чарса лартнă. Çав шутра пирĕн Тури Макаç та пулнă. Мĕн чухлĕ асапланнă ял. Хăçан анлăн сывласа ярассине никам та уççăн каламан.

Халĕ пирĕн ял «чĕри» илтмелле тапать. Тури Макаç илемленет, чечекленет. Пурăнакан халăхĕ мĕнле пултаруллă, ĕçлеме ӳркенмест. Çĕр çине ахаль килмен, мĕн чухлĕ вăйăхват унра. Чăн та, илемлĕ ял. Урамра асфальт, килсенче «кăвак çулăм» çунать, нумайăшĕ киле шыв кĕртнĕ. Урамсем сарлака, таса, хитре.

Кăçалхи февралĕн 7-мĕшĕнче «Советская Чувашия» хаçатра «Полигон получает прописку» информаци кун çути курчĕ, хыççăнах райхаçатра «Полигон. Вариантран пĕри – Макаç тăрăхĕ» ятпа материал пичетленчĕ. Полигон пуласси Тури Макаçа каллех хура пĕлĕт хупласа лартасса пĕлтерет. Нивушлĕ пирĕн тăван ялăмăр ылханлă пулчĕ-ши?!!

П.ДИВЛИКЕЕВ,
Тури Макаç ял старости.

☼ Спорт

## ТУТАРКАССИСЕМ ТЕ АПАШСЕМ

Кунти каччăсем ***ирĕклĕ майпа кĕрешессипе*** пĕрмай палăраççĕ. ЧР ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федерацийĕн вице-президенчĕн В.М.Семеновăн парнисемшĕн иртнĕ республикăри уçă турнирта ***1991-92 çулхисем хушшинче 46 килограмлă*** виçере Апашри А.Краснов пĕрремĕш вырăна йышăннă. Кунтанах Н.Осиповăн – ***50 килограмм*** виçере 2-мĕш вырăн. ***1988-89 çулхисем хушшинче*** Тутаркассинчи Г.Григорьев ***63 килограмлă*** виçере 3-мĕшпе, ***76 тата ытларах*** виçере Г.Арсентьев 1-мĕш вырăнпа тавраннă.

А.АЛИНИНА.

☼ Наци проекчĕ

# ĔÇ УКÇИ ЎСТЕРНĔ. УССИ?..

***«Сывлăх» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 2006 çулхи январьтен пуçласа участокри врач-терапевтпа врач-педиатрăн, пĕтĕмĕшле практика врачĕн тата вĕсемпе ĕçлекен медсестрасен ĕç укçи çумне хушса тӳлеççĕ. Районта çакă тĕрлĕ сас-хура çуратрĕ. Халăха медицина пулăшăвĕ парассине лайăхлатрĕ текенсем те, унăн усси пачах пулмарĕ тесе хак паракансем те пур. Редакци районăн тĕп больницин тĕп врачĕн Вячеслав Викторович Рафиновăн шухăшне ыйтса пĕлчĕ.***

– 2006 çулта районта пурĕ 34 участокри врач-терапевтпа врач-педиатр тата пĕтĕмĕшле практика врачĕ, медицинăн 40 сестри ĕç укçисĕр пуçне хушса тӳленине илсе тăнă. Ăна хушма тивĕçсем пурнăçланăшăн параççĕ.

***– Мĕнлескерсем-ши?***

– Пĕтĕмĕшле практика врачĕсем тата участокри врач-терапевтсемпе врач-педиатрсем пĕлтĕртен федераци саккунĕсемпе килĕшӳллĕн çăмăллăхлă йĕркепе медицина пулăшăвĕ илекен çынсене малтанхинчен лайăхрах пăхаççĕ. Вĕсен йышне ал ачисем, федераци саккунĕсемпе килĕшӳллĕн çăмăллăхлă йĕркепе медпрепарат илсе тăракансем кĕреççĕ. Асăннă врачсемпе медсестрасем ĕçлекен халăх хушшинче хушма диспансеризаци йĕркелесе ирттернĕ тата вĕсене пĕтĕмлетнĕ, сывлăха сиен кӳрекен çĕрти ĕçченсене медтĕрĕслев витĕр кăларнă, пĕрмай тата ялан чирлекенсен сывлăхне тишкерсе сиплев курсĕ ирттерме рецептсем çырса панă. Кашнине туса панă планпа килĕшӳллĕн вĕсем хăйсене шаннă пациентсене иммунизациленме пулăшнă. Калăпăр, пĕлтĕр 18 çула çитичченхи ачасене вируслă «Б» гепатитран тата хĕрачасене хĕрлĕ шатраран прививка тума хутшăнчĕç, çак ĕçе туллин пурнăçларĕç. Хăйсем тăвакан сиплев ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пĕтĕмлетӳсем тăвасси, справкăсем çырасси чылай ӳсрĕ. Çавна кура врачсен ĕç укçи çумне 10 000 тенкĕ, медицина сестрисен шалăвĕ çумне 5 000 тенкĕ хушса тӳлеççĕ.

***– Ĕç укçи пурĕ мĕн чухлĕ?***

– Врачсем уйăхне 15 000 тенкĕрен, медсестрасем 7 000 тенкĕрен сахал мар илеççĕ. Стажа тата категорие кура вĕсен шалăвĕ тĕрлĕрен. Ман шутпа, пирĕн республикăшăн лайăх ĕç укçи ку.

***– Халĕ Сире «Тăван Ен» хаçат вулаканĕсем çĕклекен ыйту парас тетĕп-ха: «Çав шалăва тивĕçлĕ пулассишĕн хăйсен тивĕçĕсене мĕнлерех пурнăçлаççĕ-ха?»***

– Тĕрлĕрен, каларăм ĕнтĕ, ачасене 100 проценчĕпех прививка турĕç. Анчах федераци çăмăллăхсене эмелсемпе хушса тивĕçтерес пĕтĕрне май килмерĕ, мĕншĕн тесен района вĕсемпе çителĕклĕ тивĕçтереймерĕç. Çак ыйăвăрлăхран федераци правительстви çирĕплетнĕ списока кĕртнĕ хăш-пĕр эмелсем вырăнне пирĕн аптекăсенче те туянма май пур, сиплев тĕллевĕсемпе çавнашкалах витĕмлĕ им-çам çырса панипе тухса пынă. Кун пеккисем йӳнĕрех те.

Çакна палăртмалла: 2005 çулта чирлесе ӳкнипе медицинăн васкавлă пулăшу машини чĕнтернĕ 10 000 тĕслĕх пулнă, пĕлтĕр вăл 10 процента яхăн чакнă. Ман шутпа, чирлĕ çынсене пирĕн врачсемпе медсестрасем вырăнта пулăшу ытларах панине çирĕплетет ку.

***– Пĕтĕмĕшле практика врачĕсен ĕçне мĕнле хак паратăр?***

– Маншăн хамăн хаклав пысăк пĕлтерĕшлех мар, чи кирли – пациентсен хаклавĕ.

***– Шел те, ăна пачах пĕлместпĕр...***

– Сăмахăма малалла тăсса çакна калама тивĕçлĕ: пĕтĕмĕшле практика врачĕсем иртнĕ çул хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç.

***– Ахăртнех, пысăк шалу илсе ĕçлеме черете тăракансем йышлă пуль...***

– Ку ыйтăва çапла хуравлатăп: наци проекчĕпе килĕшӳллĕн ĕçлессишĕн хытă тăрăшакан медперсонала пурне те çирĕплетнĕ. Ку ыйтăва эп пĕччен татса паман. Тĕп врач çумĕнче ятарласа комисси йĕркеленĕ. Заявленисене, ыйтусене вăл пăхса тухать, кандидатурăсене вăл сĕнет. 2006 çулшăн вĕсенче хушма килĕшӳсем туманччĕ, вĕсен умне хушса çырсах тивĕçсем лартманччĕ. Кăçал вара вĕсемпе ĕç договорĕсемсĕр пуçне хушма килĕшӳсем тунă, вĕсенче маларах асăннă хушма ĕçсене пурне те кĕртнĕ. Сăмахран, врачăн çулталăкра 5500 чирлĕ çынран сахал мар йышăнмалла (кунта ун патĕнче темиçе хут пулни те кĕрет), пациентсен çăхавĕсемпе тиркевĕсене тивĕçлĕ пулмалла мар текен йĕркесем те пур. Федераци çирĕплетнĕ ытти нормăсене те хушнă.

Паллах, халĕ врачсемпе медсестрасен ĕçне сăнасах тăратпăр. Хушма килĕшӳре çырнисене пурнăçламасан çакăн пирки кирек хăçан та ыйту çĕклеме пулать. 2006 çулта тĕп врача çавнашкал ирĕк паманччĕ. Килĕшӳсене вăхăт тухиччен татса янă тĕслĕхсем районта та, республикăра та пулман. Малашне пăхатпăр...

***– Çак медперсоналăн хисепĕ 2007 çулта ӳсет-и?***

– Темиçе çын çеç хушăнчĕ. Кăçал район халăхне кӳрекен медицина пулăшăвĕ татах ӳсĕ, унăн пахалăхĕ лайăхланĕ. «Сывлăх» наци проектне пурнăçа кĕртнĕçемĕн çакна çынсем хăйсем те асăрхĕç.

Ю.МИХАЙЛОВ калаçнă.

☼ Февралĕн 14-мĕшĕ - Юратакансен кунĕ

# «ЭПИР ЮРАТĂВА ХАКЛАНĂ...»

***Çветтуй Валентин кунне те, Юратакансен кунне те февралĕн 14-мĕшĕнче палăртаççĕ. Пирĕн çĕршывра çак кун 90-мĕш çулсен вĕçĕнче çеç уяв пулса тăчĕ, «День влюбленных» тетпĕр. («Влюбиться» сăмах чăвашла «юратса пăрах» тенине пĕлтерет-ха, анчах, шӳтлерех калас-тăк, «юрат, кайран пăрах» тенĕ пек илтĕнет). Мĕн шутлаççĕ-ши çулерех асăннă уявсем пирки аслă ăрури çынсем – Валентинăсем?***

***Валентина ГАВРИЛОВА, 82 çулта (унăн мăнукĕ те Валя ятлă):***

– Эпир çамрăк чух ку уявсем пирки илтмен те, пĕлмен те. Юрату çинчен асăрханса калаçнă, ăна тĕкĕнмен. Юрату вăл такама та пырса тивет, вăл пурнăç илемĕ. Çынна çын юратнинчен мĕншĕн кулас!

Çветтуй Валентин – çамрăк, пăхма хитре, ырă кăмăллă священник пулнă тет. Христиансен тĕнне вĕрентнĕ, III ĕмĕрте пурăннă. Çав вăхăтра Рим императорĕ II Клавдий хăйĕн легионерĕсене авланма чаракан хушу кăларать. Анчах çавах Валентин çамрăк воинсемпе вĕсен савнă хĕрĕсене венчете вăрттăн тăратма чарăнмасть. Пĕр-пĕрне юратакансене çыру çӳретме те пулăшса пырать. Çакăн çинчен пĕлсен язычниксем ăна тĕрмене хупаççĕ. Валентинпа тĕрме пуçлăхĕн хĕрĕ пĕр-пĕрне юратса пăрахнă. Хăйне вĕлерес кун умĕн, февралĕн 13-мĕшĕнче, каччă хĕр патне тĕлĕнмелле çепĕç юратуллă çыру ярать.


«Ман сана каламалли сăмах пур та...» (1955 çулхи открытка).

XVIII ĕмĕртен пуçласа Валентин священника асап тӳснĕ христианин тесе католиксен чиркĕвĕ çветтуйсен шутне кĕртнĕ. Пĕр-пĕрне юратакансем вара ăна хăйсене пулăшса пыракан вырăнне хума пуçлаççĕ.

***Валентина АНДРЕЕВА, 60 çулта:***

– Мана Валентинпа Валентина ятсен пĕлтерĕшĕ килĕшет – «вăйлă, сывă». Чăнах, эпĕ палланă Валентинăсем пурте вăйлă та çирĕп хĕрарăмсем. Арçынсенчен вара эрехе пула чире кайнă икĕ Валентин ятлă арçынна пĕлетĕп. Гороскоп вăл яланах тӳр килмест çав.

Тата ĕлĕк-авал çынсене чиркӳ календарĕ тăрăх ят хунă та, çыннăн менельникĕ хăçан çитессине малтанах пĕлнĕ. Сăмахран, майăн 7-мĕшĕ, июнĕн 14-мĕшĕ, июлĕн 19-мĕшĕ, августăн 12-мĕшĕ – Валентинсен менельникĕ, февралĕн 23-мĕшĕ тата июлĕн 29-мĕшĕ – Валентинăсен.

Юлашки вăхăтра Юратакансен кунĕ тĕлне пур çĕрте те пĕчĕк открыткăсем, «валентинкăсем», сутма пуçлани, ман шутпа, килĕшӳллĕ япалах. Вĕсем чĕре формăллă, саламлă сăмахĕсем чуна çĕклентереççĕ. Эпир çамрăк чух «почтăлла» выляттăмăр – номер тăрăх алă пусман çыру килет, ăна кам çырнине чухласа килĕшекен каччă номерĕпе хирĕç çыратăн. Тепĕр чух йăнăшни те пулкалатчĕ.

***Валентина МАКАРОВА, 67 çулта:***

– Валентина ят питĕ сарăлнă. Мана хама та çак ят килĕшет. Ас тăватăп, Валентина Терешкова тĕнче уçлăхне вĕçсе кайнă кун хĕвеллĕ те ăшăччĕ – 1963 çулхи июнĕн 16-мĕшĕ. Тус-тантăшсем хайхи мана саламлаççĕ – космосра эпĕ вĕçетĕп тейĕн. Валентина ятлă чапа тухнă хĕрарăмсем татах нумай: В.Гаганова, В.Толкунова, В.Талызина, В.Теличкина, арçынсем сахалтарах: В.Катаев, В.Распутин... Пирĕн республикăра пĕр пысăк политик тата пĕр паллă юрист пур.

Çамрăксем халь юрату çинчен ытла уççăн калаçаççĕ – телевидени хăех вĕрентет иртĕхме, радио апла мар. Иртнĕ икĕ-виçĕ çул хушшинче компьютерпа тата сотовăй телефонпа усă курса пĕрехмай юрату шыраççĕ, телей тупма васкаççĕ. Юрату çине çăмăллăтайла пăхаççĕ. Çырусем, запискăсем çырать-ши хальхи яш-кĕрĕм – пĕлместĕп. Ман шутпа, эпир юратăва хакланă, упрама тăрăшнă, çак çынсем умне туртса кăларма вăтаннă.

Паллах, Юратакансен кунĕ пулнине никам та хирĕç мар, савăнакансем савăнччăр. Мана та, эпĕ Валентина пулнă май, кăмăллă. Ку пĕчĕк уяв та иртсе кайĕ. Кайран арçынсен уявĕ, хĕрарăмсен уявĕ... Пурнăç уявсенчен тытăнса тăрать, тенĕ тăнлă çынсем.

Т.ВЕРЕНДЕЕВА интереслennĕ.

# ЭХ, ЧĂХ ТУКМАККИ!

Тулли мар яваплă «Шупашкарти кайăк-кĕшĕк фабрики» обществăна тилĕсем пĕрмай йăркканине илтнĕччĕ-ха. Ара, хырăма тăрантмалла ĕнтĕ вĕсен. Фабрикăра пĕлтĕр çăмарта тăвакан 182 чăх çухалнине пĕлсен: «Унта кашкăрсем ермен-ши?» – терĕм. Анчах тӳрех кашкăрсем сунара чăх фермине çӳременнине аса илтĕм. «Çук, юлташсем, – терĕм, ăслă шухăш каланă пек. – Фабрикăра тукмак хӳресем мар, икĕ ураллă «тилĕсемех» пулнă».

Ара, унта вун-вун çын ĕçлет, чăххисем тăрăшсах çăмарта тăваççĕ. 2006 çулхи майăн 6-мĕшĕнче 4-мĕш цехра инвентаризаци ирттереççĕ те çăмарта тăвакан 182 чăх çитменнине палăртаççĕ. «Ăçта? Камсем вăрланă?» – пĕр-пĕрин çине пăхса илнĕ фабрика ертӳçисем. Цехра чăхсене çăмарта тутарма пуçланăранпа, 2005 çулхи ноябрьтен пуçласа, кунта пурĕ 8 чăх пăхакан тата 3 слесарь-оператор вăй хунă. «Тилĕсем мар, шăпах çав ĕçченсем айăплă чăхсем тухманнишĕн!» – пĕтĕмлетнĕ пуçлăхсем.

Цехра чăх пăхакансем хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламан, хисепне сыхласа хăварассишĕн тăрăшман, тĕрĕслесе тăман тесе директор фабрикăна кӳнĕ тăкакшăн – 21273 тенкĕ те 98 пус – вун тăватă ĕçченрен шыраса илме хушу кăларнă. Çак йышăнупа цехра вăй хуракансем килĕшмен. Киле кайнă чухне сумккисене чăх чиксе тухса кайнине никам та курман, чăх тукмакки пĕçерсе çимен. Цехра ĕçлекенсен шучĕпе, инвентаризаци тунă кун тĕлне цехри чăх хисепĕ мĕнле улшăнса пынине Н.Б.Остроумовасăр пуçне урăх никам та пĕлмен. Ревизи ирттернĕ, анчах çак тĕрĕслеве цехра тăрăшакансене хутшăнтарман. Директор укçа шыраса иличчен вĕсене инвентаризаци акчĕпе паллаштарман, вĕсенчен ăнлантарса çырни илмен. Пĕтĕмлетсе каласан директор хушу кăларнă чухне Ĕç кодексĕн 247-мĕш статйине пăхăнман. Çынсене укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен явап тыттарасси çинчен кăларнă хăйĕн хушăвĕпе çийĕнчех паллаштарман. Çак çитменлĕхсене район прокуратури часах асăрханă, иртнĕ çулхи августра вĕсене пĕтерме хушнă. Фабрика администрацийĕ прокурор хушăвне çийĕнчех пурнăçланă.

С.СЕРЕГИН.

# «ЧĔВĔЛТИ ЧĔКЕÇ-2007»

***Кӳкеçри пĕрремĕш шкулта вĕренекенсем интереслĕ пурăнаççĕ. Ачасем республикăри тата районти пĕр мероприятинчен те юлмаççĕ. Акă, февралĕн 8-мĕшĕнче вĕсем черетлĕ «Чĕвĕлти чĕкеç-2007» конкурса хаваспах хутшăнчĕç. Вăл чăваш ачисем хушшинче иртет. Унта пĕтĕмпе 65 ача хăйĕн пĕлĕвне тĕрĕслерĕ.***

Шутласа пăхар-ха, хальхи пурнăçра чăваш чĕлхи тивĕçлĕ вырăнта тăрать-ши?.. Чăн чăваш ачисем хулана туртăнаççĕ, унта вĕсем пĕр-ик çул «шурă çăкăр» çисе пурăнаççĕ те... ăçтан кунта чăваш чĕлхине манаймăн-ха? Апла пулсан, пирĕн Кӳкеçсем – чăн патриотсем! Вĕсем хăйсен тăван чĕлхине юратса вĕренеççĕ.

Паллах, конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем апрель уйăхĕнче тин паллă пулĕç. Апла пулин те, ачасем хăйсен хуравĕсем тĕрĕс е йăнăш пулнине чăваш чĕлхи учителĕсемпе çийĕнчех пăхса тухма пултарĕç, мĕншĕн тесен конкурса йĕркелекен комитет ыйту бланкĕсене асăнмалăх ачасен аллинчех хăварать.

Çак вăйă-конкурс чăваш чĕлхине юратакансемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл ачасен тавракурăмне, ăс-тăнне аталантарать, нумай пĕлес туртăма чĕртет.

Тĕрлĕ сăлтава пула кăçал хутшăнайман ачасем тепĕр çул иртterекен конкурса паянах кĕтме пуçларĕç.

Ксения НЕСТЕРОВА.

# СПОРТРИ ÇИТĔНӲСЕМ

Иртнĕ эрнере Йĕпреç районĕнче ирĕклĕ майпа кĕрешессипе ЧР пĕрремĕш спорт мастерĕн О.Маркиянов академикăн призĕсемшĕн **республикăри уçă турнир** иртнĕ. Унта пирĕн район ачисем те хутшăннă. 46 килограмлă виçере Апаш шкулĕнчи **Людмила Саржан** 3-мĕш вырăна тухнă. 26 килограмлисем хушшинче **Валерий Тунгулов** ылтăн çĕнсе илнĕ (иккĕшĕн те тренерĕ В.И.Смородинов). Кӳкеçри лицейри **Денис Ильин** та (тренерĕ С.М.Петров) 35 килограмлă виçере пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Волейбол вăййи те вĕренекен хĕрсен хушшинче **район первенствинче** пит хĕрӳ иртнĕ. Çĕнтерӳçĕсем çаксем: Кӳкеçри лицей, Тутаркасси шкулĕ, 1-мĕш номерлĕ шкул. Пĕлтĕрхи çĕнтерӳçĕ команда кăçал 4-мĕш вырăна çеç тухайнă. Лицейçĕсен халь февралĕн 16-мĕшĕнче Вăрмарта зонăри командăсен хушшинче ăмăртмалла пулать.

Вырсарни кун Шупашкарта иртнĕ **«Раççей йĕлтĕр йĕрĕ - 2007»** чупăва пирĕн районтан 150 спортсмен хутшăннă. Чи лайăх кăтартупа VIP чупура палăраканĕ район пуçлăхĕн çумĕ – УКС тата ЖКХ управленийĕн пуçлăхĕ **В.Сидоров** пулнă. Шкул ачисем те унтан хаваслă кăмăлпа таврăннă.

А.СУСМЕТ.

# ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ *2-13-80*

**Администрация** Чебоксарского района ***объявляет*** конкурс на замещение вакантной муниципальной должности муниципальной службы – заместитель начальника отдела социального развития администрации Чебоксарского района.

Для участия в конкурсе необходимо представить в управление делами организационно-контрольной и кадровой работы администрации Чебоксарского района следующие документы:

– заявление на имя главы Чебоксарского района;
– анкету по форме, утвержденной распоряжением Правительства Российской Федерации;
– фотографию;
– документ, удостоверяющий личность (по прибытии на конкурс);
– документы, подтверждающие необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию (выписку из трудовой книжки, копии документов об образовании, повышении квалификации, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы);
– медицинскую справку.

Требования, предъявляемые к претенденту на замещение вакантной должности:

– высшее профессиональное образование;
– стаж работы по специальности не менее трех лет.

Заявление на участие в конкурсе принимаются ежедневно с **8.00 до 17.00** часов кроме субботы и воскресенья **до 01 марта 2007** года, в кабинете № 6,7 администрации Чебоксарского района.

***Справки по телефонам: 2-10-47, 2-16-91.***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ПРЕДВАРИТЕЛЬНОГО ОТБОРА АУДИТОРСКИХ ОРГАНИЗАЦИЙ**

**Предварительный отбор аудиторских организаций для участия в открытом конкурсе по отбору аудиторской организации для осуществления обязательного ежегодного аудита ФГУП учхоз «Приволжское» ЧГСХА за 2006, 2007, 2008 гг.**

Официальная публикация: 12 февраля 2007г. Подача предложений до: 26 февраля 2007г.

**Предмет контракта:**

Предварительный отбор аудиторских организаций для участия в открытом конкурсе аудиторской организации, для осуществления обязательного ежегодного аудита ФГУП учхоз «Приволжское» ЧГСХА за 2006, 2007, 2008гг. Поставка: Чувашская Республика, март 2007г. – март 2009г. Финансирование: собственные средства. Условия выдачи документации: по адресу заказчика.

**Информация о конкурсе:**

Прием заявок: 12 февраля 2007г. – 26 февраля 2007г. по адресу заказчика. Вскрытие конвертов: 27 февраля 2007г., 10.00, по адресу заказчика. Подведение итогов: 27 февраля 2007г., 11.00, по адресу заказчика.

**Заказчик и его адрес:**

Заказчик: Федеральное государственное унитарное предприятие учебно-опытное хозяйство «Приволжское» Чувашской государственной сельскохозяйственной академии Адрес организации: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п/о Ишлеи, д. Курмыши, ул. 9 Пятилетки, д.9. Телефоны: (883540)44-230, факс 21-066. Контактное лицо: Егоров Георгий Иванович.

**Дополнительная информация:** иметь опыт проведения аудита ФГУП; иметь опыт аудиторской деятельности не менее 10 лет;

верхний предел стоимости проведения аудиторской проверки за 1 год не должен превышать 110000 (Сто десять тысяч) рублей.

В предварительном отборе могут принимать участие аудиторские организации, подавшие заявку в течении 15 дней со дня опубликования данного извещения в информационно-аналитическом бюллетене «Конкурсные торги».

Конкурс с предварительным отбором проводится в соответствии с требованиями Постановления Правительства РФ от 30 ноября 2005г. №706.

**Главного бухгалтера** для работы в Кугеси на промышленном предприятии ***примет*** на конкурсной основе **ООО «Зодчий»**. ***Тел.: 89033458303.***

***Куплю срочно 1-комнатную квартиру или частный дом в Кугесях. Тел.: 68-00-11.***

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,15 га с кадастровым номером 21:21:29 01 03:0025, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, с.Икково, ул.Молодежная (земли населенных пунктов), для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий и строений.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,10 га с кадастровым номером 21:21:12 04 01: 0066, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Митрофанкасы, ул.Ленина (земли населенных пунктов), для огородничества.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,04 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Ишлейкасы (земли населенных пунктов) для установки башни базовой станции сотовой связи.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Поправка.** В райгазете «Тăван Ен» №№ 51-52 от 13.05.06 г. в объявлении о выделении земельных долей Мазяровой З.Д. и др. после слов « в поле №4 второго полевого севооборота общей площадью 27,93 га» следует читать: «расположенного ЧР, В-Сюктерское с/п, примерно в 600-1050 м по направлению на северо-восток д.Кибечкасы, ул.Транзитная, дом 12» и далее по тексту.

**Собственник** земельной доли Ильин В.Н. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района в счет доли 1,47 га пашни в поле №3, рабочий участок №2, третьего полевого севооборота, западнее д.14 по ул.Мира д.М.Сундырь. Возражения направить письменно в месячный срок в ***территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР по адресу: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9.***

**Собственники** земельных долей Никитин П.И., Никитина Л.А., Гаврилов Г.Г., Никитин П.В., Исаков Н.П., Ефимов Н.Г., Петров Г.П., Теплов В.Г., Захаров Н.И., Поликарпов Н.П. сообщают о намерении выделиться с земельными долями по 2,15 га пашни и 0,27 га пастбища из земель СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского района ЧР в поле № 3, рабочий участок №1, почвозащитный севооборот, южнее д.Чиршкасы. Возражения направить в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельной доли Ващенок Владимир Мефодьевич, действующий на основании доверенности от имени участников общей долевой собственности СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР сообщает о выделе земельного участка южнее д.Шобашкаркасы в поле №8 первого полевого севооборота, участок №1 14,7 га. Выделяемый участок не превышает среднекадастровую оценку. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул. Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,0668 га с кадастровым номером 21:21:27 07 02:0093, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Кивсерт-Марги, ул.Лесная (земли населенных пунктов), для огородничества.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Добавление.** В райгазете «Тăван Ен» №7 от 24.01.2007 г. в объявлении о выделении земельных долей Храмову И.А. и др. после фамилии «Максимова М.П.» добавить фамилии «Пегасов М.И., Иванов В.Н., Иванова Р.И.»

**Добавление.** В райгазете «Тăван Ен» №№ 147-148 от 23.12.2006 г. в объявлении о выделении земельных долей Степанову Ю.А. и др. после слов «расположенного между д.Важуково и ж/дорогой» добавить «Кольцов А.И., Кольцов В.А., Яндулов В.А. в поле №1 второго севооборота, расположенного южнее д.Янду».

✵ ✵ ✵

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» скорбит и выражает глубокое соболезнование медицинской сестре приемного отделения Венере Ильиничне Федоровой, много лет проработавшей в МУЗ «Чебоксарская ЦРБ», в связи со смертью мужа

**Василия Федоровича ФЕДОРОВА.**

МОУ «Тренькасинская СОШ» скорбит по поводу смерти учительницы

**Анны Тимофеевны ТИМОФЕЕВОЙ**

и выражает глубокое соболезнование родным и близким.

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 13.02.2007 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1800. Заказ №
Индекс газеты - 54820.